С(чув)

Лидия Ковалюк

# Ырӑ кун



ББК 84 Чув 7
К56

Национальная библиотека ЧР
4-029205

29205 чув
ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская т. З. 1253 Т. 10.0000

48030 10200—
К————————
М136(03)—8

тви, 1985 ç.

кф

Обязат. экз.

С (чув)
К 56

Лидия Ковалюк

# ЫРĂ КУН

Калавсем



29205-чув
Библиотека им. М. Горького

ШУПАШКАР
ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
1985

ПРОВЕРЕНО
2010 28 СЕН 2017



## Улмуççи

Ашшĕпе пĕрле Славик мĕн те пулин тума шутсăр юратать. Хăй вăл пĕчĕкçеç кăна-ха. Ашшĕ çиййĕнчи пиншак аркине те аллипе аран-аран кармашса тытать. Паллах, çапла вăл час-часах тумасть. Хăйсен килĕ умĕнчи çырмаран сăрталла хăпарнă чухне, ырнă пек пулса, тытатчĕ. «Ах! — тетчĕ вара вăл, — ывăнтăм».

Паян Славик ун пек хăтланмарĕ.

— Эсĕ, ачам, самаях пысăклантăн ĕнтĕ, — асăрхаттарчĕ ăна урама тухас умĕн ашшĕ. — Манран урăх ан уртăн. Атту çынсем лайăх мар шутлĕç сан пирки. «Эх, — тейĕç, — Славик çаплах ӳсмест. Вăйĕ çук, ватă пекех ывăнать...»

Ашшĕпе ывăлĕ нумай хут кайса килчĕç çырмана. Сăртра Славик пĕрре те чарăнса тăмарĕ. Кашнинчех ашшĕнчен малтан хăпарчĕ. Пушăлла мар. Пĕчĕк витри-

сем тулли шывпа. Ашшĕ хăвалаcа çитме пуçласанах, çутă пушмакĕсемпе вĕлтĕртетсе Славик малалла чупатчĕ.

Вĕсем паян улмуççисем лартрĕç те, шыв чылай кирлĕ пулчĕ: кашни йывăç лакăмнех икшер витре шыв ячĕç.

Анкартинче ĕç пĕтерсен, ашшĕпе Славик пӳрт умне, палисадника, тухрĕç. Пĕчĕк пахча теççĕ ăна хăйсем. Кунта, çатракаллă чие тĕмисен айккинче, лаштра пилеш пурччĕ. Ватăччĕ вăл. Тăрринчи хăшпĕр турачĕсем хăрнăччĕ те хура курăнатчĕç. Кăçал, çу пуçламăшĕнче, шурă сапакисем сарăхма ĕлкĕричченех, çак пилеш тӳнчĕ. Вăйлах мар çиле те чăтаймарĕ. «Юрать-ха,— терĕ Славик ашшĕ çавăн чухне,— картана çĕмĕрмерĕ, çӳлерехрен хуçăлчĕ.» Славик ашшĕ унăн вулли юлашкине тымарĕ-мĕнĕпех кăкларĕ. Шăтăкне тислĕк çĕрĕкĕпе торф пăрахрĕ. Çурри таран. Кĕркунне вăл кунта улмуççи лартса хăварма пулчĕ. Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ.

Акă шăтăкри çĕре Славик ашшĕ кĕреçепе таккаса-турасa кăпкалатрĕ. Унтан вăл çамрăк улмуççине, юлашки улмуççине, имçам шĕвекĕ янă каткаран кăларчĕ те, самаях вăрăм та парка хăмăр хура тымарсене пур еннелле те тирпейлĕн саркаласа, нихăшне те амантмасăр шăтăка антарчĕ. Пӳрнерен тачка мар вулла тытса тăма каллех, анкартинчи пекех, Славика сĕнчĕ ашшĕ. Хăй вăл çап-çутă вĕçлĕ кĕреçипе тăпра сапрĕ те сапрĕ. Çак ĕçе те вăл асăрханса, тымарсене тĕкĕнсе шăйăрсран сыхланса турĕ.

— Ачам, пĕлетĕн-и, мĕн тери хитре пулĕ пирĕн кил умĕ? — терĕ Славик ашшĕ, çамрăк вулă йĕри-тавращĕнчи тăпрана кирза аттипе тапта-тапта.— Улмуççи хăвăрт ӳсĕ. Ик-виçĕ çултанах çеçкене ларма тытăнĕ. Кашни çуркуннех шап-шурă курăнĕ. Таçтанах тутлă-тутлă шăршă сарĕ. Чӳречене уçăн та, пӳртех кĕрĕ çав сывлăш. Çулла-кĕркунне шурă хĕрлĕ улмасем куçа илĕртĕç...

Каçпа Славик тĕлĕк курчĕ. Улмуççи çав тери пысăкланса кайнă пек. Пӳрт тăрринчен те çӳле çĕкленнĕ.

Тӳрĕ тытăнса тăма май çуккипе, ытла та йывăррипе çăра та вăрăм тураттисем çĕрелле усăннă: улмисем питĕ-питĕ нумай, купалансах ларнă, çав тери хитре, таса, шутсăр шултра. Тĕсĕ вара, чăнах та, Славик ашшĕ каланă пекех, шурă хĕрлĕ... Пур иртен-çӳрен чарăнса тăрсах çак улмуççине киленсе пăхать. «Епле пулма пĕлнĕ-ши ытла тĕреклĕ те çулçă палăрми улмаллă йывăç?» — акă мĕн тĕлĕнтерет кашнинех. Ваттисем те, вĕттисем те сасăпах калаççĕ çак шухăша.

— Ăна Славик лартнă,— ăнлантарать вĕсене кӳршĕ ачи, Славика яланах мĕнпе те пулин — е канфетпа, е пĕремĕкпе — хăналаканскер.

Юратать ăна Славик, мĕншĕн тесен вăл çав тери уçă кăмăллă. Урапа çавăрса çӳремелли хăйĕн пĕчĕк машинине те, çутă кăвак сăрăллăскерне, Славика вăл часчасах парать: «Ме,— тет,— ярăн!». Вăл питĕ ырă тантăш. Халĕ, ав, Славик ĕçĕпе савăнать, ун çинчен мăннисене каласа парать.

— Çав пĕчĕкскер-и? — тĕлĕнеççĕ çынсем. Ĕненесшĕн мар, иккĕленеççĕ.

— Славик! — хуравлать Славикăн тантăшĕ каллех çирĕппĕн.— Вăл ăна шăварсах тăчĕ. Айне кăпкалатрĕ. Имçам сапрĕ...

Çакна илтнĕ-илтменех пурте Славика мухтама тапратрĕç:

— Ай, ĕçчен те!

— Хăй пĕчĕкçеç — епле пултаруллă!

— Маттур ача...

Кун пек сăмахсем кама килĕшмĕç? Анчах майĕпенмайĕпенех Славика темĕнле туйăм пăлхатма тытăнчĕ. «Мĕнле-ха,— шухăшларĕ вăл,— манăн улмуççи хăвăрт çитĕнчĕ? Ăна эпĕ шăварма та ĕлкĕрменччĕ пуль, имçам та паманччĕ... Атте каларĕ-çке: эсĕ тăрăшса пăхмасăр вăл ӳсмест, терĕ. Лартасса та ĕнер кăна лартрăмăр пек. Çу-у-ук, пулма пултараймасть!» — юлашки сăмахсене кăшкăрсах вăранса кайрĕ Славик.

Шап-шурă вырăн çинче вăл пĕр минут та ачашланса



выртмарĕ. Ваткăллă симĕс утиялне сирсе пăрахрĕ те, ура çине сиксе тăрса, урам енчи чӳрече патне чупса пычĕ. Тапочкине те тăхăнмарĕ — васкарĕ. Рамăна икĕ аллипе тĕксе, пысăк кантăка яри уçса ячĕ — пăхать: улмуççи ĕнерхи пекех ларать. Çӳлелле çĕкленнĕ кĕске те çинçе тураттисене, хăрнă хăмла çырли аврисемпе чĕркесе (хĕл çитсен, юр айĕнче шăшисем ан кăшлаччăр тесе), вулă çумне çыхнă. Йĕри-таврари тăпра тип-типех.

— Шăвармасăр хăварма юрамасть, — тенĕччĕ ĕнер ашшĕ. — Каç пулать. Эсĕ ывăнтăн. Ыран шыв сапăн. Юрать-и?

— Ăхă-ă, — шантарчĕ ашшĕне Славик.

Паллах, Славик шăварать ăна. Паян та, ыран та — тăпри исленсе çитиччченех. Кĕркунне шывсăр юлсан, хĕллехи сивĕре улмуççи шăнать тесе, ашшĕ асăрхаттарнине Славик нихçан та манас çук. Тепĕр çуркунне, çулла та унăн айне вăл кăпкалатĕ. Кирлĕ чухне ашшĕпе пĕрле ăна вăл имçам парĕ. Ку улмуççине те, пысăк пахчарисене те Славик пĕр пекех пăхĕ, юратса ӳстерĕ. Вĕсемшĕн вăл çын умĕнче намăс курмастех ĕнтĕ. Ырă ят çеç илтĕ. Ĕçрен вăл хăрамасть. Ӳркенмест..

Славик çамрăк улмуççи çине пăхса тăрса шухăша кайрĕ. Вăл иртнĕ хĕлле пысăк пахчара ашшĕпе пĕрле мĕн курнине аса илчĕ. Вĕсем ашшĕпе иккĕшĕ ирхине унта улмуççисене пăхма тухнăччĕ.

— Славик, пăх-ха çак йĕре, — терĕ ашшĕ. — Мĕн йĕрри вăл? Пĕлетĕн-и?

Пăхрĕ, пăхрĕ Славик, анчах пĕлеймерĕ. Питĕ уçăмлă йĕр: икĕ пăнчă юнашар, тепĕр иккĕ — умлă-хыçлă, вара каллех юнашар... Мĕн йĕрри-ши?..

— Пĕлместĕп, — терĕ Славик, çамки çине анса ларнă çĕлĕкне кăшт çĕклесе.

— Мулкачăн вăл, — пĕлтерчĕ ашшĕ. — Астуса юл. Çавăн пек чупать мулкач... Авă кунта, — кăтартрĕ ашшĕ, — йĕр татăлнă, мулкач сикнĕ çакăнта.

— Атте, унта, ав, пĕр вырăнта тапăртатнă-им, йĕрсем пит нумай?

— Тĕрĕс. Унта вăл пĕр вырăнтах тапăртатнă, ларнă та... Çулла мулкачсем тĕрлĕ курăк, йывăç çулçисем çиеççĕ. Сивĕсем пуçлансан, йывăç тураттисене кăшлама пăхаççĕ. Çавăнпа та улмуççисене мулкачсем кăшласа сиен тăвасран сыхланмалла...

Çакна яланах асра тытĕ Славик.

Кравать пуçĕнчи пукан çинчен шурă çитсă кĕпипе çăм шăлаварне Славик йăпăр-япăр илсе тăхăнчĕ, пушмакне тытрĕ...

Кăмака умĕнче çĕрулми шуратса ларакан асламăшĕ ун еннелле тĕлĕнсе тинкерчĕ. «Ачана мĕн пулнă? Ирех ниçта та каякан марччĕ-çке»,— шухăшларĕ вăл.

— Ăçта васкатăн, Славик? Кам патне? — ыйтрĕ вăл яланхи пекех ăшшăн.

Славик кирек ăçта каяс пулсан та, асламăшĕ пĕлсе юлма тăрăшать. Славик çакна тахçанах хăнăхнă. Çапах та паян вăл асламăшĕн ыйтăвне савăнса кĕтрĕ.

— Улмуççи шăварма! — хуравларĕ вăл хĕпĕртӳллĕн, хăй тăвас ĕçĕпе питĕ мăнаçланса.— Шăвармасан, вăл типпе юлать, хĕлле шăнать,— хушса хучĕ çав самантрах, ашшĕ каланине аса илсе, мăн çын пек.

Пиншакне тăхăннă-тăхăнманах Славик пӳртрен тухса вăркăнчĕ. Килкартинче кĕçех унăн пĕчĕк витрисем чăнкăртатни илтĕнчĕ.

«Ача ĕçе хăнăхать»,— шухăшларĕ асламăшĕ, мăнукĕшĕн савăнса.





## Ырӑ кун

Петӗр лайӑх ача. Ӳрӗк, вӑр-вар. Килтисене ялан мӗнле те пулин пулӑшма, ырӑ тума тӑрӑшать.

Асламӑшӗ апат пӗҫерме хатӗрленнине Петӗр сисет кӑна — тӗпсакайне йӑпӑр-япӑр анать те хӑйӗн пӗчӗк витрипе ҫӗрулми тултарса та парать: «Ме, асанне, тыт»,— тет. Урайне ӑнсӑртран шыв сирпӗнсессӗн те, Петӗр ӑна ҫийӗнчех типӗ ҫӗтӗк татӑкӗпе шӑлса илет, мӑннисем хушасса нихҫан та кӗтмест.

Сарайӗнчен ашшӗпе пӗрле вутӑ йӑтса кӗме Петӗр уйрӑмах хытӑ юратать. «У-у-ух, сивӗ-ӗ-ӗ! — тет вара вӑл, пӗр-ик вутсыппи ҫӗкленӗскер, пӳрте кӗнӗ-кӗменех.— Сурӑхсем шӑнмаҫҫӗ-ши? (Ку сӑмахсене иртнӗ ҫулсенче амӑшӗ тек-текех калатчӗ. Ҫакна илтсенех, аслисем халӗ йӑл кулаҫҫӗ.)»

Каҫхине ӗҫрен таврӑннӑ амӑшӗ алӑ ҫума пуҫличченех

Петӗр ун патне алшӑлли ҫӗклесе пырать. Е тепӗр чух тата, умывальник пӑти шак-шак! шаклатма (пушӑлла янӑрама) тытаннӑ пек туйӑнсан, Петӗр кӑмака умӗнчи кастрюльтен куркапа ӑшӑ шыв ӑсса илет те: «Анне,— тет,— унта шывӗ пӗтет, ме, тултар».

Анчах ашшӗне те, амӑшне те Петӗр питӗ сахал курать.

Ашшӗ унӑн — тракторист, амӑшӗ — доярка. Вӗсем ирпе ирех ӗҫе каяҫҫӗ те кая юлса, час-часах сӗмтӗттӗмпе тин, таврӑнаҫҫӗ. Ун пек чух ашшӗпе амӑшне кӗте-кӗтех Петӗр ҫывӑрма выртать, ыйха путать.

Петӗрӗн асламӑшӗ те ҫулла ӗҫе ҫӳретчӗ. Ҫӗрулми ани ҫинче ҫум ҫумлатчӗ. Улӑхра утӑ тавӑратчӗ, пуҫтаратчӗ. Уйра улмурисем лартма та тухкаларӗ вӑл. Петӗре те хӑйӗнчен хӑвармарӗ. «Пӗччен сана тунсӑх пулӗ»,— тетчӗ вӑл ӑна.

Халь акӑ, хӗлле, асламӑшӗ ниҫта та каймасть. Самаях ватӑ ӗнтӗ вӑл, пенсире. Канмалла унӑн. Ҫапах вӑл пӗртте ахаль лармасть-ха. Ӑна валли вӑй хумалли мӗн те пулин тупӑнсах тӑрать.

Петӗр те ун ҫумӗнче тӗрмешет. Ирхине, апат ҫисессӗн, вӑл кӗпе ҫаннисене тавӑрать те асламӑшӗ ярса панӑ шап-шурӑ тазри шывпа чашӑк-тирӗк ҫӑвать. Асламӑшӗ ҫав хушӑра сӗтел ҫийне тасатать, чӳрече кантӑкӗсене шӑлса типӗтет. Кӗҫех вара иккӗшӗ те ӑшӑ тумланса пӳртрен тухаҫҫӗ, вите-картари выльӑх-чӗрлӗхе апат параҫҫӗ, ӗне-сурӑх айсарӑмне улӑштараҫҫӗ, тислӗкне пӗчӗк кивӗ ҫатана тултарса пахчана, сарай хыҫне, ҫунашкапа туртса каяҫҫӗ.

Каҫпа юр ҫунӑ пулсассӑн, Петӗрпе асламӑшӗ кил хушшинче те, урамра та ҫул уҫаҫҫӗ. Асламӑшӗ юра сапсарӑ йывӑҫ кӗреҫепе тӑваткал-тӑваткалӑн каса-каса хӑйпӑтса аяккалла ывӑтать. Петӗр ун хыҫӗнче юлнӑ юр чӑмӑрккисене кӗске авӑрлӑ ҫӑмӑл ҫеҫ тимӗр кӗреҫепе илеиле перет.

Асламӑшӗ ҫӑла шыв ӑсма каяс пулсассӑн та, Петӗр унран хӑпмасть. Хӑйӗн пӗчӗк витрине, ҫутӑ кӑвак сарӑ-

скерне, çапкалантарса, шурă çăматтисемпе сукмак айккинелле те пускаласа, малта чупать-чупать те вăрт çаврăнса тăрать: «Эпĕ кунта çитрĕм. Эсĕ ывăнмарăн-и?» — тет вăл кăштах кая юлнă асламăшне.

Кăмакара вутă çунса пĕтсессĕн, юшкăсене хупсассăн, асламăшĕ кĕнчелеççи тытса çăм арлама пуçлать е, çемçе диван кĕтессине лăпчăнса, алсиш-чăлха çыхать.

Кун пек чухне Петĕрĕн ирĕксĕрех вăхăта пĕччен ирттерме тивет. Вăл шăпланать, ашшĕ парнеленĕ пĕчĕк тракторпа урайĕнче кăштăртатса е «вутă турттарать», е «хире тислĕк кăларать»... Юлашкинчен вăл ĕçлесе ывăннă трактора хут «гаража» лартать. Тăхлан салтаксене пĕр рете тăратса унталла-кунталла уттарать...

Кун пек выляса та вăл часах йăлăхать.

Чӳрече умне пырса урамалла, кӳршĕсен пахчи вĕçĕнчи çырма урлă сăрталла, пăхать вара Петĕр. Унта çунашкапа ярăнма каяс килет ун. Е йĕлтĕрпе, ашшĕ илсе панă кăвак йĕлтĕрпе, çӳрĕччĕ вăл уйра. Асламăшĕ ямасть. «Пĕччен-çке эсĕ. Инкек пулĕ те, сана кам унта пулăшĕ?» — тет.

Аван мар çав пĕччен. Кичем. Тантăшĕсем Петĕрĕн çук. Кӳршĕри аслăрах ачасем пурте шкула çӳреççĕ — урăх яла. Ыттисем ытла пĕчĕккĕ. Пĕртен-пĕр юлташĕ пурччĕ те, кăçал çуркунне вĕсем килйышĕпех хулана пурăнма куçрĕç.

Петĕр паян çав тери тĕлĕнчĕ: ашшĕ те, амăшĕ те килте. Чи малтан, хăй лайăххăн вăранса çитичченех, амăшĕн сассине илтрĕ вăл: «Чăнах-ши ку?» — шухăшларĕ. Куçне уçрĕ Петĕр — амăшĕ тĕпелте ашшĕпе калаçать иккен. «Аш кукли тăвас-и?» — тет. «Анне фермăна каймасть,» — шухăшларĕ Петĕр. Ашшĕ те ĕçе пуçтарăннă пек туйăнмасть, сухалне те хырман-ха, канмалли кун çеç вăл çапла васкамасть. Мунча хутать пулĕ-ха. Çăвăнсассăн тап-таса çипуç тăхăнĕ. Уяври пекех шукăль курăнĕ вăл. Унччен, тен, Петĕрпе иккĕш йĕлтĕрпе ярăнса килĕç. Çапла пултăрччĕ! Вăт савăнăç!

Кравать çинчен Петĕр яшт кăна сиксе анчĕ.

— Анне,— терӗ вӑл тӳрех,— эсӗ фермӑна каймастӑн-и?

— Каймастӑп-ха, ачам, каймастӑп,— терӗ амӑшӗ.— Манӑн канмалли кун.

— Атте, санӑн та-и?— ыйтрӗ ашшӗнчен Петӗр.

— Çукчӗ те,— хуравларӗ ашшӗ.— Çанталӑкӗ ниçта кӑларасшӑн мар, ав, епле çавӑрттарать!

Петӗр мӗнле-ха асӑрхаман? Тулта çав тери вӑйлӑ çил-тӑман кӗрлет-мӗн. Пӳрт мӑрйи янӑрать. Чӳрече кантӑкӗсем тапхӑр-тапхӑр тӑрр! тӑрр! чӗтреççӗ.

— Юрать-ха,— тет ашшӗ,— ӗнер утӑ турттарса килтӗм фермӑна. Тен, çакна сиссех-и каяс килчӗ...

— Пирӗн хӗрсем унта мӗнле çитӗç-ши?— пӑшӑрханса сӑмах хушрӗ Петӗр амӑшӗ.

Çил-тӑман йӑтӑнса анни Петӗре çеç ним чухлӗ те пӑшӑрхантармарӗ. Вӑл кӑмака айккинчи умывальник умне пырса тӑчӗ. Пит çума. Çавӑнтах, хӑйне пӗр-пӗр хаклӑ парне панӑ самантри пек, ним тума пӗлми савӑнса ташланӑ евӗр, тапӑртатса та илчӗ вӑл.

Ӑна халь чӑнах питӗ-питӗ лайӑх. Ашшӗ те, амӑшӗ те, асламӑшӗ те — пурте килте. Кун пекки сайра пулать. Эппин, мӗншӗн хӗпӗртес мар!

— Атте, мӗн тӑватпӑр?— ыйтрӗ Петӗр.— Вутӑ илсе кӗретпӗр-и?

— Вуттине ӑна каçпах йӑтса кӗтӗм-ха... Юр вӗçтере пуçланӑччӗ те, тӑман тухатех пуль терӗм.

— Мунча хутӑпӑр-и?

— Э-э, ачам, мунча патне çитеймӗн те халь. Унта ӗнтӗ тем çӳллӗш юр купаланнӑ. Çулне те уçаймӑпӑр, тулсах пырӗ.

— Ним те тумастпӑр-и?

Петӗр тинех шухӑша ӳкрӗ. Унӑн тулта çӳрес килетчӗ. Ашшӗпе юнашар. Йӗлтӗрпе ярӑнасшӑнччӗ вӑл. Лайӑхрах ярӑнма вӗренесшӗнччӗ. Ашшӗпех! Кайран мунча хутасшӑнччӗ. Халь, ав, çанталӑк пӑсӑлнӑ. Çавӑншӑнах унӑн паян та пӳртрех кун ирттерме тивет-ши?

Петӗр салхулланнӑçемӗн салхулланчӗ.

— Апат çиер-ха, ачам.— Сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ ашшĕ Петĕре.— Ун хыççăн, тен, мĕн тумалли курăнĕ... Ĕнер эпĕ ĕçрен таврăннă чухне магазина кĕтĕм те пĕр кĕнеке туянтăм,— терĕ ашшĕ, Петĕр амăшĕ еннелле кăштах çаврăнса.— Ача чухнех шутсăр юрататтăм та. Тепре вулас килчĕ.

«Мĕнле кĕнеке-ши вăл?» — пĕлесшĕн, ăна хăвăртрах тытса курасшăн ăшталанма тапратрĕ Петĕр.

Апат çисессĕн, чашăк-тирĕк çусан, Петĕр çав кĕнекене ашшĕнчен ыйтса илесшĕнччĕ. Ашшĕ ăна сĕтел çине кăларса хунă та-мĕн.

— Уçкалăса пăх-ха, Петĕр,— сĕнчĕ вăл,— тен, сана та килĕшĕ. Ӳкерчĕксене кур.

Çапла каларĕ те вăл кухньăна кайрĕ. Çĕçĕ хăйрама ларчĕ иккен. Петĕр асламăшĕ тахçанах: «Çĕçĕсем мăкалса çитрĕç, хăйрама ерçекен те çук»,— тесе ӳпкелешетчĕ.

Ашшĕ пĕр çĕççе хăйраса аякка хунă сасса Петĕр аванах илтрĕ. Теприне мĕн вăхăт хăйранине, виççĕмĕшне хăçан тытнине те вăл пачах сисмерĕ. Амăшĕпе асламăшĕн калаçăвĕ те ун хăлхине тем самантра кĕми пулчĕ. Вĕсем пурри-çуккине те вăл манчĕ тейĕн. Ним чĕнмесĕр, пуçне çĕклемесĕр кĕнеке çине пăхса ларчĕ Петĕр: ӳкерчĕксем ăна питĕ килĕшрĕç.

Акă сăрт хĕрринче пĕр ача ларать. Выльăх çитерме тухнă ĕнтĕ. Çывăхрах, сĕвекре, сурăхсем курăк çиеççĕ. Ача шăхличĕ калать... Петĕрĕн те пурччĕ шăхличĕ. Лайăхчĕ вăл, ашшĕ туса панăскер. Иртнĕ çуркунне, пахча хыçĕнчи сăрт çамкинче юр ирĕлсе пĕтсен, çак ача пекех, Петĕр те асламăшĕпе пĕрле сурăхсем çитерме çӳрерĕ. Путеккисем те нумайччĕ. Хăшпĕр чухне вĕсене хăваласа, сиккелесе, Петĕр ывăнатчĕ. Курăк çине питĕ ларас килетчĕ ун. Асламăшĕ чаратчĕ. «Çĕр сивĕ, шăнса пăсăлăн»,— тетчĕ. Петĕр вара тăрсах шăхличĕ калатчĕ. Ку ача ларать, ав. Çĕрĕ ăшăннă-ши?

Кунта, акă, çăл ӳкернĕ. Валаклă. Петĕрсен кассинче те ун пек çăл пур, çырмара. Хĕрарăмпа арçын тăраççĕ.


НАРСПИ

Çамрăк-ха хăйсем. Шыв ăсма аннă. Тем калаçаççĕ. Витри тулнă, тăкăнать. Петĕр асламăшĕ те çăл кутĕнче çынсемпе калаçма юратать. Тепĕр чухне, хĕлле, ăна кĕтсе Петĕрĕн урисем шăнмах пуçлаççĕ. Вăл вара асламăшĕ çумне пырать те, кĕрĕкĕ аркинчен хуллен туртса: «Атя, атя»,—тет. Асламăшĕ хускалмасть: «Сана сивĕ пуль. Чуп эс, чуп, Петĕр. Эпĕ çиччас»,—тет.

Ашшĕ пырса тăнине те Петĕр асăрхамарĕ. Ăна вăл чавсипе тĕкĕнсессĕн çеç курчĕ.

— Ну, мĕнле, кĕнеке хитре-и?—ыйтрĕ ашшĕ лăпкăн.—Ăна вулама та çăмăл. Лайăх çырнă. Итлес килмест-и?

Петĕр вулама пĕлмест-ха. Пĕлнĕ пулсассăн, вăл ăна хăех вулĕччĕ. Халь, ӳкерчĕксем курса, кĕнекере мĕн çинчен çырнисене Петĕр çапларах ăнланчĕ: ку ачан асламăшĕ çук, çавăнпа вăл сурăхĕсене пĕчченех пăхать, хăйне кичем те—шăхличĕ калать. Çăл патĕнче ун ашшĕпе амăшĕ тăраççĕ, амăшĕн килне часрах таврăнмалла, анчах ашшĕ ăна килĕнче темскер каласа пĕтермен: вăл, ĕçе кайма тухнăскер, тем аса илнĕ те çăл патне пынă...

Ашшĕ вуланине Петĕр тăрăшсах итлерĕ, сĕтел хушшинче кăшт та тапранмасăр пек ларчĕ. Вăл хăйĕн шухăшĕ тĕрĕс пуласса кĕтрĕ, анчах та куçĕ умĕнче пачах урăх ӳкерчĕксем ӳкерĕнчĕç. Çуркунне, юр ирĕлет пур çĕрте те, варсенче шыв юхать, çӳлте тăри юрлать... Пӳрте кĕрес те килмест Петĕрĕн çавăн пек кунсенче. Тултах шутсăр лайăх. Ĕне те витере выртасшăн мар. Хĕвеллĕ картишне тухса тăрать те кавлет кăна. Çурăмĕ çинчен çерçисем çăм тата-тата кайнă вăхăтра та вăл вырăнтан хускалмасть. Петĕр юратать ăна. Кайăксем унăн çăмне пĕтĕмпех татса пĕтересрен, çаралса юлнă Красунĕ шăнса чирлесрен хăрать. Асламăшĕ «татчăрах» тенĕрен çеç Петĕр пĕр кайăка та хăваламасть.

Петĕр самантлăха та ашшĕне тăнлама пăрахмарĕ. Çук. Çак ӳкерчĕксем ăна итленĕ хушăрах, хăвăртах, унăн пуçĕнче çапла сăрланса пычĕç. Вĕсене вăл хăй чухланă

пекрех, хайне май курчĕ. Хăшпĕр сăмахсене тĕллĕн-тĕллĕн Петĕр ăнланаймарĕ. Ун йышшисене малтанах вăл сиктерсе хăварасшăнччĕ. Вĕсем хушăнчĕç те хушăнчĕç. Вара вăл тек чĕнмесĕр чăтаймарĕ. Ашшĕ сывлăш çавăрма пек чарăннă-чарăнманах, Петĕр тем çинчен те ыйта пуçларĕ:

— Ăçта вăл Силпи ялĕ? Инçетре-и?

— Пуш уйăхĕ вăл хăвăл-и? Çĕрле çутатаканни-и?

— Сентти ма кĕвенте утланса чупать? Вылямалли урăх ним те çук-и?

— Хĕвел мĕншĕн хытă хĕртет?..

Петĕр мĕн пĕлменнине ашшĕ васкамасăр, тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Нумай хушă ларчĕç иккĕшĕ шăкăл-шăкăл калаçса, унтан вара малтан вуланинех Петĕр тепĕр хут вулама ыйтрĕ.

Ку хутĕнче те вăл тимлĕн, хăлхисене тăратсах итлерĕ. Хăй ăнланман вырăн халь ăна тупăнмарĕ пек туйăнчĕ те, Петĕр шутсăр хытă савăнчĕ.

Унăн тата итлес килетчĕ, анчах ашшĕ кĕнекене хупрĕ.

— Çитĕ, ывăлăм,— терĕ вăл.— Каярахпа, шкулта вĕреннĕ чух, ăна пĕтĕмĕшпех вуласа тухăн. Хăвах! Ĕлкĕретĕн.

Ашшĕн юлашки сăмахĕсем Петĕр хăлхине кĕмерĕç пекех. Унăн пуçĕнче çаплах сăвă кĕвви янăрарĕ. Хăшпĕр йĕркесене вăл чиперех астуса юлчĕ, халĕ вĕсене хăй ăшĕнче каларĕ, пăшăлтатса та илчĕ. Унччен те пулмарĕ— пуканĕ çинчен вăл яшт сиксе тăчĕ.

— Атте, итле! — терĕ вăл, тӳрех сăвă калама тытăнса:

Тусем, сăртсем хуп-хура
Юрĕ кайса пĕтнĕрен.
Тухать курăк çăп-çăра
Хĕвел хытă хĕртнĕрен.

Ашшĕ тĕлĕнсех кайрĕ. «Пăх-ха эс ăна,— епле тăнлă!» — шухăшларĕ вăл. Петĕр те хытă хĕпĕртерĕ. Куçĕ ялтăраса кăна тăрать.

— Аван, аван, ачам,— терӗ ашшӗ, кӑштӑркка ӳтлӗ аллипе Петӗре пуҫӗнчен ачашшӑн лӑпкаса.

— Эпӗ пуҫламӑшне кӑштах мантӑм-ха,— пӗлтерчӗ Петӗр.

Ӑна ҫав тӗле ашшӗ тепре вуласа кӑтартрӗ. Петӗр халӗ йӑлтах асра тытса юлчӗ.

— Ӗнтӗ пӗлетӗп,— терӗ вӑл ҫирӗппӗн, татах савӑнӑҫлӑраххӑн.— Акӑ, тӑнла эппин, атте:

Пуш уйӑхӗн вӗҫӗнче
Хӗвел пӑхрӗ ӑшӑтса.
Силпи чӑваш ялӗнче
Юр ирӗлчӗ васкаса...

Малалли йӗркесене те вӑл такӑнмасӑр, хавхаланса каларӗ. Кашни сӑмахӗн пӗлтерӗшне ӑнланса, сӑвӑ ӳкерчӗкӗсене уҫҫӑн курса тӑчӗ.

Амӑшӗпе асламӑшӗ те Петӗре питӗ юратса итлерӗҫ, ӑна мухтарӗҫ. Ҫапах та пуринчен ытла Петӗр хӑй хӗпӗртерӗ. Ҫӗннине, ку вӑхӑтчен илтменнине, вӑл нумай пӗлчӗ. Эх, вулӗччӗ вӑл ҫак кӗнекене! Пӗрре мар, виҫӗ хут, пилӗк хут — пӗтӗмпе пуҫа кӗрсе юличченех, кайран та...

Витене выльӑхсене апат пама ашшӗпе пӗрле тухсассӑн та, пӳрте кӗрсессӗн те сӑвӑ каларӗ те каларӗ Петӗр. Ашшӗ панӑ кӗнекене тытса та, вуланӑ евӗр мӑкӑртатса, самай ларчӗ вӑл. Унтан, ҫӑматӑ тӗпӗ хуракан ашшӗ патне пыра-пыра: «Ку мӗнле саспалли? Ку мӗнле саспалли?» — тесе те ҫине-ҫинех ыйтрӗ вӑл. Ашшӗ кӳренмерӗ, ӗҫлеме кансӗрлетӗн темерӗ. Петӗр вулама вӗренесшӗн пулнине туйса, вӑл савӑнчӗ кӑна.

Кӗҫех вӑл Петӗре урӑхла пулӑшма шухӑш тытрӗ. Алфавитра пур саспаллисене пурне те, хаҫат-журналтан каса-каса, пӗрер-пӗрерӗн картон тӑваткалсем ҫине ҫыпӑҫтарчӗ. Ун хыҫҫӑн Петӗре вӑл виҫӗ саспаллипе паллаштарчӗ, сасӑпа калама вӗрентрӗ. Юлашкинчен, вӗсене юнашаррӑн хурса, сӑмах туса пачӗ.

Малтанах Петӗр ӑна ниепле те вулаймарӗ.

— Эсӗ саспаллисене уйрӑмшарӑн мар, татса мар, тӑсарах каласа ҫыхӑнтар,— ӑс пачӗ ӑна ашшӗ.

Петӗр ӑна итлерӗ те: «А-а-а-ннн-ннн-е-е»,— терӗ аран-аран.

«Анне! Анне!» — каларӗ вӑл вара васкасах. Хӑй них-ҫан савӑнманла савӑнчӗ...

Тулта паҫӑрах тӗттӗмленчӗ. Ҫил-тӑман чарӑнмарӗ, йӑ-вашланчӗ кӑна. Мӑрье ҫаплах ӳлет-ха. Кантӑксем те вӑхӑт-вӑхӑтӑн чӗтреҫҫӗ.

— Ах! Мӗнле усал кун пулчӗ паян,— терӗ Петӗр ас-ламӑшӗ.

— Ҫу-ук,— терӗ Петӗр хыттӑн.— Паян ы-ы-рӑ кун пулчӗ!

Ӑна пурте ӑнланчӗҫ. Петӗрӗн куҫӗ ӑшшӑн-ӑшшӑн ҫуталса илчӗ.




29205-чув
Чувашская Республиканская Библиотека им. М. Горького



**«Ун пек ма-а-ар...»**

Ытти чухне Анна ача садӗнчен килнӗ-килменех урама тухмаваскатчӗ. Унта юртан тунӑ тӑвайкки пур. Пысӑках мар та, ҫунашкапа ярӑнма питӗ лайӑх. Анна тантӑшӗсем те ҫавӑнта пуҫтарӑнаҫҫӗ.

Халь, акӑ, темшӗн кӳреннӗ пек, Анна лутра диван ҫине шӑппӑн хӑпарса ларчӗ те самантранах пуҫне пӗчӗк минтер ҫине хучӗ.

— Анне,— терӗ вӑл хуллен, вӑйсӑррӑн,— манӑн пуҫ ыратать.

Амӑшӗ унӑн ҫамкине тытса пӑхрӗ те хӑрасах ӳкрӗ — кӑвар пекех вӗри. Пичӗ те хӗп-хӗрлех. Тултан кӗрсенех: «Сивӗрен ҫапла пулӗ ку»,— тесе шутланӑччӗ вӑл. Ҫук-мӗн, уншӑн мар.

— Хӗрӗм, мӗн пулчӗ сана? Шӑнтӑн-и? Е сивӗ шыв таҫта ӗҫрӗн? — юратнӑ тӗпренчӗкӗ мӗншӗн чирленине пӗлме тӑрӑшрӗ амӑшӗ.

Анна уçăмлăн ним те калаймарĕ.

...Кун хыççăн кун иртрĕ. Врач киле-киле сипленине пула, Аннан пыр шыççийĕ чакма пуçларĕ.

Вăл каллех хăй юратнă пуканесемпе выляма, тетте кĕнекесене уçкаласа пăхма тытăнчĕ. Пĕррехинче вăл, амăшĕ юнашар пырса ларсассăн, яланхи пекех мĕн те пулин каласа кăтартма ыйтрĕ. Шăп çав вăхăтра почтальон çыру парса хăварчĕ. Анна амăшĕ конверта хачăпа касса уçрĕ те çырăва сасăпах вулама тапратрĕ. Ăна инçе хулана нумайлăха командировкăна кайнă Анна ашшĕ çырнă-мĕн.

Амăшĕ вуланине тимлĕн итлерĕ. «Урамра вылянă чух Анна юр çинĕ пуль»,— илтрĕ вăл кĕтмен çĕртен. «Мĕ-ĕ-ĕн? Мĕншĕн ун пек калать-ха атте? — тĕлĕнчĕ Анна.— Ун пек мар...»

Шарламасăр ларма ĕнтĕ Анна пултараймарĕ.

— Анне,— сăмах хушрĕ вăл, амăшне малалла вулама чарса.— «Анна юр çинĕ» тет атте. Ун пек ма-а-ар... Çимен эп... Верăпа вылянă чух пăр катăкĕ çеç ĕмрĕм...





## Ашшӗпе ывӑлӗ

Шурӑ йӑмрасем кӑшт та хускалми ларӑҫҫӗ, пас пӗрчисене — пӗрине те — ӳкересшӗн мар пек. Пӳрт мӑрйисенчен мӑкӑрланакан тӗтӗм юписем тӳпене кармашнӑ. Сивӗ.

Кӑчӑрт-кӑчӑрт, кӑчӑрт-кӑчӑрт! — кӑчӑртатать ура айӗнчи юр. Пӗр урамра ҫын утни тепӗр урама илтӗнет.

Ашшӗпе юнашарах танкӑлтатать Юра. Ҫапах та унӑн пӗчӗкҫеҫ хура ҫӑматтисен айӗнчи юр пӗртте кӑчӑртатмасть, ҫемҫен нӑтӑртатать кӑна. Йӗрӗ те палӑрмасть. Ашшӗн аттисем ҫул хыттинех шӑтара-шӑтара кӗреҫҫӗ. Пысӑк ҫав Юра ашшӗ. Унран ҫӳллӗ, тӗреклӗ ҫын Юра курман-ха. Юра ҫакна та лайӑх пӗлет: ашшӗ ун уҫӑ кӑмӑллӑ.

Вӑл лӑпкӑн калаҫать. Хирӗҫме юратмасть. Паян та акӑ, пӳртрен тухас умӗн, ӗҫе ҫӳренӗ чухнехи пекех ҫӑм свитерӗпе кӗске кӗрӗкне тӑхӑнасшӑнччӗ вӑл. Юра амӑшӗ

çакна асăрхарĕ те: «Сан,— терĕ,— мĕн, урăх ним те çук-и? Клуба каятăн пуль»... Юра ашшĕ пĕр сăмахсăрах вара чăн-чăн уява пуçтараннă пек тумланчĕ.

Пуçĕнче унăн хура çăм çĕлĕк, çийĕнче йăлтăркка хăмăр çухаллă тĕксĕм пальто. Пальто айĕнчи шурă йăрăмлă костюмĕ те, хĕрлĕ сарă шарфĕ те, шурă кĕпи те— пурте халь унăн вĕр-çĕнĕ.

— Чаплă пухăва лайăх çипуçпа пынине ним те çитмест,— терĕ Юра амăшĕ вĕсене ăсатнă чух.— Эп те пырăттăм та, шкула каймалла. Питĕ итлес килетчĕ...

Юра амăшĕ — учительница. Ялтах вĕрентет. Ашшĕ— тракторист та, комбайнер та. Клубра паян колхоз пухăвĕ пулать. Унта Юра ашшĕне парне памалла. Хăй ун çинчен пĕлмест-ха, Юра амăшĕ пĕлет. Çавăнпа Юрăна пухăва яма шутларĕ те вăл.

— Ан ашкăн эс унта, Юра,— ăс вĕрентрĕ вăл ăна.— Ла-а-а-йăх тăнласа лар. Кайран, киле килсен, ху мĕн илтнине мана каласа кăтартăн.

Юрăпа ашшĕ клуб патнелле çывхарнăçемĕн урамра çынсем йышланса пычĕç. Унта та кунта килкарти алăкĕсем уçăлса хупăнаççĕ — чĕриклетеççĕ, шалтлатаççĕ. Çамрăксем те, ватăсем те — пурте Юра ашшĕне сывлăх сунаççĕ. Хăйĕн пӳрчĕ умне тухса тăнă шап-шурă сухаллă мучи ăна аякранах пуç тайса илчĕ. Юра ашшĕ вара çултан пăрăнса кĕрсех ăна алă пачĕ те:

— Мĕнле пурăнатăн, мучи? — терĕ.— Аван-и?

Хăйне çапла хисепленĕшĕн ватă çын хытă савăнчĕ.

— Тавах ырă кăмăлушăн,— тавăрчĕ вăл ăшшăн.— Тавах сана...

Çак сăмахсенех Юра ашшĕне тепĕр çын та каларĕ. Вăл сап-сарă вырăсла хаçха алăкне хупнă-хупманах çул çине чупса тухрĕ те Юра ашшĕпе çумăн утма пуçларĕ.

— Тавах сана, Захар Петрович! — терĕ вăл Юра ашшĕне сывлăх суннă хыççăн.— Эсĕ пулăшман пулсан, паянччен те йывăç илсе килейместĕм пуль. Халĕ пурте пур: чул та, кирпĕчи-цеменчĕ те. Çуркунне лартасах те-

тĕп пӳрт... Тавах, Захар Петрович! Ӳркенмерĕн. Тăван пек пулăшрăн.

Юра ашшĕ хăйне мухтанине юратмасть. Çавăнпа вăл ăна урăхларах калаçтарма пикенчĕ.

— Эсĕ,— терĕ вăл,— çуртна урама тăрăхла лартасшăн-и-ха?

— Тăрăхла. Хĕвеле хирĕç, урамалла, çичĕ чӳрече кастарас тетĕп. Пӳрт çутă пултăр. Çине тимĕр витес...

Клуба çитичченех çак çын Юра ашшĕпе калаçса пычĕ. Хăй çамрăк-ха: сухалĕн палли те çук. Сасси янăравлă, хаваслă. Сивĕ пулсассăн та, вăл кĕске пальто çеç тăхăннă, сарă çăмлă çухавине тăратман, çĕлĕк хăлхисене те антарман. «Мĕнле шăнмасть-ха вăл?» — тĕлĕнчĕ Юра.

Юра палламасть ăна: ялĕ пысăк çав. Ашшĕ ăна та пулăшнă, ав. Вăрмантан пĕренесем турттарса панă тракторпа. Тен, ĕç хыççăн, тен, кану кунĕнче кайнă вăл унта. Хăй унччен ыйăннă пуль. Çын ыйтнă та — вăл килĕшнĕ. Çавăн пек вăл. Темле ĕлкĕрет — пурне те усă кӳме, пулăшма тăрăшать. Юратать ăна Юра, çавăнпа шеллет те. Тепĕр чухне ашшĕ, шутсăр вăйлă пулсан та, хытах ĕшеннине Юра лайăх пĕлет.

Астăвать-ха Юра: пĕррехинче, çулла, çĕрĕпе суха тунă ашшĕ ирхине таврăнчĕ те: «Кăштах канас пуль,— терĕ.— Куç хупăнсах ларать». Çук, выртма ĕлкĕреймерĕ хăй. Пĕр хĕрарăм килчĕ те ăна пӳрт хăпартмашкăн пыма чĕнчĕ. Юра ашшĕ вара пĕр тăхтаса тăмасăрах унпа кайрĕ. Унтан вăл тӳрех уя — хăйĕн тракторĕ патне — тухнă, каллех çĕрĕпе сухаланă...

Юра ашшĕне пурте хисеплеççĕ. Юра та ăшă сăмах тем чухлех илтнĕ ун çинчен. Акă, клубра пуху пуçланчĕ те, ăна президиума суйларĕç.

Ашшĕ вара пĕчĕк Юрăна вырăнтах юлма хушса хăварчĕ те, сăрлă урай хăмисене чĕриклеттерсе утса пырса, сцена çинчи вăрăм сĕтел хушшине йывăррăн кĕрсе ларчĕ. Пичĕ хĕрелнĕ. Эппин, вăтанать вăл. (Юра çакна тахçанах сиснĕ: ашшĕ ун вăтансанах хĕрелсе каять.) Хăй çапах-ха лăпкăн курăнасшăн. Хускалмасть те. Пысăк



аллисене кăтартас мар тесе-ши, вăл вĕсене хĕрлĕ çиттиллĕ сĕтел айне пытарнă.

Тата хăçанччен ашшĕ çине çеç пăхса ларатчĕ Юра — пĕлме çук. Кĕрен пуставлă трибуна умне тухса тăнă председатель сасси илтĕнчĕ те, Юра çавра хăмăр куçĕпе ирĕксĕр пекех ăна тинкерчĕ.

— Юлташсем! — терĕ председатель. Вăл, хуп-хура çăра çӳçлĕскер, хĕрлĕ йăрăмлă шурă кĕпи çинчи шурă хĕрлĕ галстукне сулахай аллипе тӳрлетесшĕн пек тurt-каласа илчĕ. Пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ. — Паян эпир, — каларĕ вăл унтан, — ăмăртура мала тухнă хамăрăн паттăрсене, мухтавлă ĕç геройĕсене, чыслама пухăнтăмăр.

Клуб тулли халăх шăп пулчĕ. Çав шăплăхра председатель сасси кăна илемлĕ кĕвĕ пек янăрарĕ те янăрарĕ. Пурте ăна тимлĕ тăнларĕç.

Малтанах Юра та ăна тăрăшсах итлерĕ, анчах хăй те сисмерĕ — тем вăхăтра çуллахи кунсене аса илме пуçларĕ.

Ыраш вырма тухсассăн ашшĕ ăна пĕрре комбайн кабинине хăйпе юнашар хăпартса лартнăччĕ. Юра аялалла пăхрĕ те хăйне çӳллĕ сăрт тăрринче тăнă пекех туйрĕ. Тавралăх инçе-инçе курăнать. Пур енче те — сап-сарă тырă. Кăчăр-кăчăр-кăчăр, кăчăр-кăчăр-кăчăр! — касса пырать ăна комбайнăн сарлака та çутă çĕççи. Хыçалта сап-сарă улăм куписем ретĕн-ретĕн выртса юлаççĕ. «Манăн вырса пăхасчĕ», — шухăшларĕ Юра, ашшĕ икĕ аллипе тытнă штурвал унки çине ăмсанса пăхса. Çакна сиснĕ пекех вара ашшĕ: «Штурвал тыт-ха, ачам, — терĕ. — Кăштах ĕçле ман вырăнта».

Юра сасартăк шикленсе ӳкрĕ. «Пултарăп-и?» — ыйтрĕ хăйĕнчен хăй ăшĕнче. Çийĕнчех лăпланчĕ. Вăл çакна тавçăрса илчĕ: ашшĕ ăна савăнтарасшăн. Хăй вăл комбайнăн кашни хусканăвне сăнаса пырĕ, ăна пĕртте пăркалантармĕ. Чăнах, ку çапла пулчĕ те.

— Штурвала эс çирĕп тыт, ан çавăркала, — асăрхаттарчĕ Юрăна вăл.

Лакăмлă-тĕкĕмлĕ пысăк хура унка Юра пĕчĕк аллисемпе пĕтĕм вăйран çупăрларĕ. Пичĕ те хĕп-хĕрлĕ пулчĕ хăйĕн.

Комбайна унăн та ашшĕ пекех тӳп-тӳрĕ çӳретес килчĕ. Тикĕс вырăнта машина чиперех пычĕ-ха. Ана итлеттерме йывăр мар пек туйăнчĕ Юрăна. Анчах та хăрах кустăрма куçа курăнман шыв çурăкне лăнк! анса ларчĕ çеç — штурвал унки вăрр çаврăнса кайрĕ. Юрать, Юра ашшĕ ăна çав самантрах тытма ĕлкĕрчĕ те комбайна пăркаланма памарĕ.

— Ку ним те мар, — лăплантарчĕ Юрăна вăл. — Хам асăрхаймарăм. — Кăштахран çапла хушса хучĕ: — Санран, ачам, маттур комбайнерах пулĕ... Чипер ӳс кăна.

Ашшĕ комбайнпа е тракторпа ялтан инçе мар ĕçленĕ чух Юра кашни кунах ун патне кайма тăрăшрĕ. Унпа пĕр кабинăра çума-çумăн ларса çӳреме ăна питĕ килĕшетчĕ. Кайран вăл тĕлĕкре те ашшĕпе пĕрле пĕрре кăна мар тырă вырчĕ, суха та турĕ. Уй-хирте ирттернĕ çав самантсене Юра халь те лайăх астăвать. Пурне те куç умĕнче пекех курать, илтет те.

Акă вăл — трактор кабининче. Ашшĕ сухана тухнă. Кунĕ ăшă-ăшă. Янкăр уçă тӳпере тăри вĕлтĕртетет. Пĕр вырăнтах тăрать-тăрать те аялалла йăрр чăмать, унтан каллех тăрлата-тăрлата çӳлтен çӳле çĕкленме тытăнать. Пачах палăрман темĕнле пусма картлашкисем тăрăх сике-сике хăпарнă пек туйăнать вăл Юрăна. Çĕрте, акапуçĕ хыçĕнче, хура кураксем, чанасем шавлăн явăнаççĕ — хурт-кăпшанкă пуçтараççĕ. Акапуç тĕренĕсем, ана кĕтессисенче тĕкĕр пек ялтăртатса, çутă кабинăна тата хытăрах çутата-çутата илеççĕ. Юра ашшĕ савăнăçлă — хуллен шăхăркалать. Юрăна та лайăх-лайăх. Эх, çӳретĕччĕ вăл хăй çак трактора! Пĕчĕккĕ çав. «Ӳсес пулать», — тет ашшĕ ăна.

Пахча хыçĕнче Юрăна вăл антарса хăварать. «Киле каях ĕнтĕ, — тет. — Ыран тата ярăнтарăп. Юрĕ-и?»

Тепĕр кунне Юра ирех пахчана тухса тăрать.

Ашшĕ ăна курать те тракторне чарать, кĕтсе илсе,

хăйпе юнашар хăпартса лартать. Хĕпĕртет хăй. Юра çакна тахçанах асăрханă: иккĕшĕ пĕрле чухне ашшĕ яланах хаваслă. Юрататъ вăл Юрăна. Ăсатса яма кабинăран йăтсах кăларать те ăна вăл: «Пы-ы-ысăк пул, ĕçчен пул!» — тесе çӳле-çӳле çĕклесе антарать. Юра та кăмăлĕпе ун патнех туртăнать.

Юра халь те ашшĕ çине пăхать. Ашшĕ те ăна куçран вĕçертместпекех. Хĕрлĕ сĕтел урлă, малти ретсенчи çынсем урлă Юра еннеллех тинкерет вăл. Часах вăл: «Итле, лайăх итле, ачам», — тенĕ пек туйăнчĕ Юрăна.

Çав самантрах, пач кĕтмен çĕртен, ашшĕн ятне илтрĕ Юра. Ăна председатель каларĕ. Хыттăн янăрарĕ ун сасси.

— Захар Петрович, — терĕ председатель малалла та хăватлăн, çĕкленӳллĕн, — пирĕн паттăрсенчен паттăрри. Кам пуринчен ытла сухаларĕ? — Захар Петрович! Кам пуринчен ытла тырă вырчĕ, çапрĕ? Каллех — Захар Петрович! Вăл — пур ĕçре те чи малти. Вăлах — питĕ шанчăклă юлташ та. Çын инкеке лекет — Захар Петрович тӳрех ăна пулăшмаваскать...

Çумăрлă кĕркунне инçетри вăрмантан вутă турттарса килекен пĕр трактор ванса кайнă. Трактористчĕ, çамрăкскер, ăна пĕччен юсама пултарайман. Пулăшма Юра ашшĕ юлнă. Никам хушмасăр, ыйтмасăрах. Хăй ирĕкĕпе. Çĕрĕпех ĕçленĕ вăл. Лачкам йĕпеннĕ. Шăннă. Юлташне çавах пăрахса хăварман. Тракторне юсаса пĕтернĕ-пĕтернех...

Çаксем çинчен илтрĕ те халь Юра пĕрре хăраса ӳкрĕ (ашшĕшĕн шикленчĕ), тепре — савăнса кайрĕ: «Маттур манăн атте!» — шухăшларĕ вăл мăнаçлăн. Çавна сиснĕ евĕр, председатель те ун сăмахĕсем пекех каларĕ:

— Маттур Захар Петрович! Чăн-чăн маттур!.. Паян эпир ăна правлени йышăннипе акă çак приемника парнелес терĕмĕр. Вăл тивĕç ăна.

Хăйне кун пекех чысласса кĕтмен Юра ашшĕ вăтаннипе каллех хĕрелсе кайрĕ. Трибуна умне тухма та вăл те пĕлмерĕ, те хăймарĕ. Председатель хăй ун патне пыр-

са тăчĕ те ćĕтел урлă кармашсах ăна «Ленинград» радиоприемник пачĕ, икĕ аллипе ыталаса чуптурĕ. Пĕтĕм халăх алă çупса ячĕ. Вăрахчен тăвăллăн янăрарĕ алă çупнă сасă аслă клубра.

Çынсене курса Юра та алă çупрĕ.

Ашшĕне çакăн пек хисепленĕшĕн, ашшĕ çав тери маттурришĕн Юра шутсăр хытă хĕпĕртерĕ. Унăн та ашшĕ пекех ĕçчен, чаплă çын пулас килчĕ — питĕ, питĕ! Çав самантра хăйне вăл комбайн штурвалне тытса пынă пек туйрĕ... Вĕçĕ-хĕррисĕр сарă уй. Кăчăр-кăчăр-кăчăр! илтĕнет пĕр евĕрлĕ кĕвĕ Юрăна.

— Атя, ачам, — чĕнчĕ ашшĕ, ăна пĕчĕкçеç аллинчен тытса. Ашшĕ çитсе тăнине те, çынсем клубран тухма пуçланине те Юра пачах сисмен иккен. Унăн куçĕ умĕнче ял çумĕнчи хуп-хура аначчĕ. Сухалатчĕ вăл ăна. Янкăр уçă тӳпере тăри юрлатчĕ. Кунĕ ăшă-ăшăччĕ...

Халь, акă, ашшĕпе юнашарах танкăлтатать Юра. Кăчăрт-кăчăрт-кăчăрт! — кăчăртатать ура айĕнчи юр. Сивĕ.

Юрăна пурпĕрех ăшă-ăшă. Вăл ашшĕ пирки шухăшлать. Каллех вăл ашшĕ тырă вырнине, суха тунине курать. Ашшĕ ĕçре хастаршăн, ăна пурте юратнăшăн савăнать Юра. «Эп те атте пек пулатăп», — тет хăй ăшĕнче. Çавăн çинчен, клубра мĕн курни-илтни çинчен амăшне каласа пама васкать вăл халĕ.

Юр хавассăн кăчăртатать: кăчăрт-кăчăрт, кăчăрт-кăчăрт!.. Ашшĕпе ывăлĕ юнашар утаççĕ. Иккĕшĕ те питĕ савăк.



## Тупмалли

УЛМУҪҪИ
2

ЫРĂ КУН
8

«УН ПЕК МА-А-АР!..»
18

АШШĔПЕ ЫВĂЛĔ
20

*Для дошкольного возраста*

**Лидия Алексеевна Ковалюк**

**ДОБРЫЙ ДЕНЬ**

Рассказы

На чувашском языке

Редактор
Г. Г. Чаржов

Художник
М. А. Ильин

Художественный редактор
Э. М. Юрьев

Технический редактор
В. П. Окина

Корректор
А. К. Шашкина

ИБ 1654

Сдано в набор 17.05.85. Подписано в печать 24.09.85. Формат $84 \times 108/_{16}$. Бумага офсетная № 2. Гарнитура школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,36. Усл. кр.-отт. 13,44. Уч.-изд. л. 1,56. Тираж 8000 экз. Заказ № 2215. Изд. № 97.
Цена 15 коп.
Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии
и книжной торговли,
428019, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

15 пус.



Чăваш
кĕнеке издательстви